| 25 | Çуркунне çитрĕ.<br>К. Иванов « Çуркунне | — илемлĕ литература хайлавĕсемпе фольклор хайлавĕсене, вĕсен жанрĕсене уйăрма вĕренсе пырасси; | **1** |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | çитсен» | | |
| | Н. Шелепи «Пар каять», Н.Сладков «Упа йенни» | — палăртулăх хатĕрĕсене курма, вĕсемпе усă курма хăнăхасси. | |
| 26 | А. Николаев «Сурхи саса», М. Козлов «Сур сескисем» | — хайлаври сăнлăха тата сăнарлăха тупасси; Илемлĕ хайлава вуласа ăнланасси | **1** |
| | Н. Мартынов «Суркунне», А.Игнатьев «Пĕрремĕш аслати» | Илемлĕ хайлава вуласа ăнланасси | |
| | **Черчунсем –пирен туссем** | | |
| 27 | М. Пришвин «Тискер кайаксем», М. Волкова «Пăши пăрушĕ» | — пулăма, сăнарсене сăнлама сăмахсен ретĕнчен вырăнлăраххисене, витĕмлĕреххисене суйласа илесси; | **1** |
| | Г. Луч «Ай, пакша!» Хв.Уяр «Пурăш» | — хайлав тытăмне ăнланасси (композици, сюжет), | |
| 28 | А. Хум «Кăткăсем» , Р.Сарпи «Улай» | — сăнарсен ĕçĕсемпе хăтланăвĕсене сăлтавласси: | **1** |
| | Г. Луч «Чĕкеçсем мĕншĕн сивĕннĕ?» | Пуплеве аталантарасси:<br>— текстра тĕл пулакан çĕнĕ сăмахсен пĕлтерĕшне усăмлатасси; | |
| 29 | Г. Харлапьев «Юрă ăстисем», М Стельмах «Текерлĕк» (с . 180-182) | — сăмахăн тӳрĕ тата куçăмлă пĕлтерĕшĕсене палăртасси.<br>— чĕлхе туйăмне çивĕчлетесси;<br>Илемлĕ хайлава вуласа ăнланасси | **1** |
| | М.Пришвин «Çăмăлттай», К. Чуковский «Чăх чĕппи» | Пуплеве аталантарасси:<br>— текстра тĕл пулакан çĕнĕ сăмахсен пĕлтерĕшне усăмлатасси; | |
| 30 | Н. Эревет «Сар автан», В. Сухомлинский «Мăр-мăр кушак мĕнрен тĕлĕнне» | — юмаха, калава, сăвва пĕр-пĕринчен уйăрса илесси. | **1** |
| | Г. Харлапьев «Çырла пиçсен», Б. Заходер «Мулкач çури» | Пуплеве аталантарасси:<br>— текстра тĕл пулакан çĕнĕ сăмахсен пĕлтерĕшне усăмлатасси; юмаха, калава, сăвва пĕр-пĕринчен уйăрса илесси. | |
| | **Усен-таран тенчи** | | |
| 31 | Н.Матвеев «Пĕр йăхри йывăссем», Ç. Элкер «Юман» | — юмаха, калава, сăвва пĕр-пĕринчен уйăрса илесси. | **1** |
| | Г. Орлов «Вăрманăн | | |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | пĕрремĕш кучченĕçĕ»,<br>М. Волкова «Хурлăхан, ан хурлан!» | — илемлĕ литература хайлавĕсемпе фольклор хайлавĕсене, вĕсен жанрĕсене уйăрма вĕренсе пырасси;<br>— юмаха, калава, сăвва пĕр-пĕринчен уйăрса илесси. | |
| 32 | Р. Сарпи «Куле»,<br>Н. Сладков «Пулă тăвăнни» | | |
| | Г. Харлапьев «Çумăр»,<br>Н. Шупуссынни «Каç пулчĕ» | — хайлав тытăмне ăнланасси (композици, сюжет), | **1** |
| | **Су уйахне кетемер** | | |
| 33 | А.Алка «Малтанхи аслати», С. Асамат «Çумăр ташши» | — сăнарсен ĕçĕсемпе хăтланăвĕсене сăлтавласси: | **1** |
| | И.Гончаров «Аслатиллĕ çумăр умĕн», Ç. Элкер «Çуллахи ир» | — палăртулăх хатĕрĕсене курма, вĕсемпе усă курма хăнăхасси. | |
| 34 | Ю.Силэм «Утă çинче вăрманта» | — илемлĕ литература хайлавĕсемпе фольклор хайлавĕсене, вĕсен жанрĕсене уйăрма вĕренсе пырасси; | **1** |
| | А. Костецкий «Утăра»,<br>Г. Тал – Мăрса «Хирте» | Илемлĕ хайлава вуласа ăнланасси ,<br>— ачасен кăмăл-туйăмне хускатассипе, аталантарассине, ăс-тăнне çивĕчлетессине | |

**Тематическое планирование по литературному чтению на родном (чувашском ) языке**

**3 класс**

| **№** | **Тема** | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | **Раздел 1. Чăваш çершыве 2 ч** | | | | |
| | | Пуре | Тереслев ececем | Практика ececем | **ЭОР, ЦОР** |
| **1.1** | Савнă çĕр, Чăваш çĕр-шывĕ. Чăваш республикин Патшалăх атрибучĕсем. | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **1.2** | Чăвашсен юрри-ташши. çĕкленьллĕ, хавхаланулллă сăвăллă хайлавсем. | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| | **Раздел 2. Керкунне. 2 ч** | | | | |
| **2.1** | Кĕр пуçламăшĕн сăнлăхĕсем, вĕсене сăнламалли мелсем | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **2.2** | Класс тулаш\нчи вулав (КТВ) Шкула, ачасем\р, шкула! | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| | **Раздел 3. Халах самахлăхĕ 4 ч** | | | | |
| **3.1** | Тупмалли юмахсем – халăх | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | сăмахлăх\н тĕслĕхĕсем. çыравăсем хайланă тупмалли юмахсем | | | | |
| **3.2** | Пулмасла халап. | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **3.3** | КТВ «ĕç– пурнăç илемĕ» | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **3.4** | Юптарусем. | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| | **Раздел 4. Улăп йахĕнчен эпир, туссем… 2 ч** | | | | |
| **4.1** | Мифсем. Улăп халапĕсем. | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **4.2** | Мифсем. Улăп халапĕсем | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| | **Раздел 5. Юмах юпа тарринче 4 ч** | | | | |
| **5.1** | Чăваш халăх юмахĕ. Чĕр чун юмахĕсем. | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **5.2** | КТВ Ачалăх – савăк вăхăт | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **5.3** | Тĕрлĕ халăх юмахĕсем. Йăла юмахĕсем | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **5.4** | Асамлă юмахсем. | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| | **Раздел 6. Асамçă хĕл. 3 ч** | | | | |

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| **6.1** | Поэзи хайлав\сенчи сăнарлăх мелĕсем. | | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **6.2** | Хайлаври сăнарсем. | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **6.3** | КТВ Асанне арчинчи мерчен. | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| | **Раздел 7. Эпир – сăпайлă ачасем 11 ч** | | | | |
| **7.1** | Н. Карай. «Йăмăк». | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **7.2** | М. Джалиль. «çывракан ача». Р. Минатуллин «Пулăшакан» | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **7.3** | А Кăлкан «Наян Кампур», А. Галкин «Шăна кăмпин шăпи» | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **7.4** | Н Иванов «Чечек çыххи» | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **7.5** | И Шухши «Кĕрен тъпе» | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **7.6** | Г. Волков «Пуянлăх хакне ĕçлекен çеç пĕлет» | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **7.7** | Л. Ковалюк. «Хăравçă». | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **7.8** | О. Уайльд. «Хаяр Улăп» | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **7.9** | Исмай Исемпек. «Шăвăç витре» | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **7.10** | К. Ушинский. | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | «Вăрманти ачасем» | | | | |
| **7.11** | КТВ çут çанталăк тата эпĕ. | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| | **Раздел 8. Сур хаваслăхе 6 ч** | | | | |
| **8.1** | Н. Исмуков. «çурхи тĕнче», Л. Смолина «çуркунне пуçланать» сăввисем | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **8.2** | Н. Некрасов. «Ешĕл шав». Уйăп Мишши «çурхи вăйă» | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **8.3** | Мĕтри Кипек «çурхи вăрманта» | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **8.4** | Соколов-Микитов «Вăрманта» | | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **8.5** | Г. Снегирев «Малтанхи хĕвел» | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| **8.6** | К. Иванов «çуркунне çитсен» | 1 | 0 | 1 | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |

**Тематическое планирование по литературному чтению на родном (чувашском ) языке**

## 4 класс

| № п/п | Тема урока | Количество часов | | | Дата изучения | Электронные цифровые образовательные ресурсы |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | | Всего | Контрольные работы | Практические работы | | |
| 1 | Çамрăкла вĕренни – чул çинче. Г. Волков. Вĕреннĕ Лаша. Г. Сапгир | 1 | | | | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| 2 | Тăван Çĕршыв – пирĕн анне. К. Ушинский. Чăваш Республикин Патшалăх гимнĕ. | 1 | | | | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| 3 | Кĕрхи сăнсем. Н. Теветкел.Кĕр пасарĕ. Н. Исмуков. Кĕрхи вăрманта. И. Соколов-Микитов. Кĕрхи хурăн. М. Волкова. | 1 | | | | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| 4 | Тупмалли юмахсем (туптарусем). Вăйă-шăпа юрри-сăвви | 1 | | | | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| 5 | Ăсансене ертсе килни. К. Чулкаç. Пакшапа кашкăр. Тилĕ Туспа Кролик Тус. Джоэлл Харрис | 1 | | | | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| 6 | Улăпсем. Г.Юмарт. Ной карапĕ. Библирен. Ту çинчен аннă Улăп. | 1 | | | | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| 7 | Чее такасем. Чăваш халăх юмахĕ. Курай юмахĕ. Пушкăрт халăх юмахĕ. Пакшапа мăйăр. Удмурт халăх юмахĕ | 1 | | | | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| 8 | Хĕл пуçламăшĕ. В.Эткел. Хĕлле. | 1 | | | | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |

| | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | А.Пушкин. Хĕллехи çу кунĕсем. Н.Сладков. | | | | | |
| 9 | Йĕлтĕрпе. В. Харитонов. Халăх хайлавĕ майлă. А.Смолина. | 1 | | | | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| 10 | Йăмăк. Н.Карай. | 1 | | | | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| 11 | Çывракан ача. М.Джалиль. Чечек çыххи. Н.Иванов.Кĕрен тӳпе. И.Шухши | 1 | | | | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| 12 | Çурхи тĕнче. Н.Исмуков. Çуркунне пуçланать. Л.Смолина. | 1 | | | | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| 13 | Ешĕл шав. Н.Некрасов. Çурхи вăйă. Уйăп Мишши. | 1 | | | | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| 14 | Малтанхи кун. А.Алка. Çумăр куççулĕ. А. Галкин. | 1 | | | | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| 15 | Вăрçă çăкăрĕ. Ю.Николаева. | 1 | | | | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| 16 | Т Аптраман кăвакалсем. Н. Ишентей. Кашкăрсемпе çапăçни. Çемен Элкер.ема урока | 1 | | | | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| 17 | Тема урока Эл кулли. И.Дубонов. | 1 | | | | http://salikovo.chuvash.org/nachalka/index.htm |
| ОБЩЕЕ КОЛИЧЕСТВО ЧАСОВ ПО ПРОГРАММЕ | | 17 | 0 | 0 | | |

**Приложени 2**

**Ачасен çитĕнĕвĕн шайне палăртмалли хаклав виçисем**

**1класс**

Пĕрремĕш çул вĕренекенсен вулав ăслайĕсемпе хăнăхăвĕсене куллен тĕрĕслесе пымалла, сăмах вĕççĕн хакламалла.

I класра сăмахри сыпăксемпе сасăсене уйăрас, вĕреннĕ сас паллисемлĕ сăмахсене, предложенисене, текстсене ăнланса, тĕрĕс, тикĕс, сыпăкăн-сыпăкăн вулас хăнăхусен аталанăвне асăрхасах тăмалла. Вĕренӳ çулĕ вĕçнелле программăра кăтартнă ăслайсем (текста ăнланса, тĕрĕс те тикĕс, йывăр сăмахсене сыпăкласа, ансатраххисене тулли сăмахăн минутра 20-25 сăмах таран вулас пултарулăх) еплерех шайрине тĕрĕслемелле, сăмахпа каласа хакламалла.

**2 класс**

**«5» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** ача текста тĕрĕс вулать пулсан;

1- мĕш çур çулта текста тикĕс, сыпăкăн-сыпăкăн, хăш-пĕр сăмахсене сыпăкламасăр минутра 30 (ăшра 45) сăмахран кая мар вулать.

2- мĕш çур çулта текста тулли сăмахăн (хăш-пĕр сăмахсене çеç сыпăкласа), минутра 50 (ăшра 60) сăмахран кая мар, сăмахсене, сасăсене тĕрĕс, пăсмасăр, сыпăксемпе сас паллисене вырăнĕпе ылмаштармасăр, сăмахсенчи пусăмсене тĕрĕс туса, предложенисен вĕçĕнчи чарăну паллисене пăхăнса тивĕçлĕ чарăнусемпе, инто- наципе вулать; текстри палламан сăмахсене асăрхама пултарать; юмаха, калава, сăвва пĕр-пĕринчен уйăрма, вулани тата текстри ӳкерчĕксем çинчен йĕркипе, çыхăнуллăн каласа пама, вĕрентекен ыйтăвĕсем тăрăх текстпа ĕçлеме пĕлет; сăнарсен ĕçĕсемпе хăтла- нăвĕсене сăлтавлама пултарать; пăхмасăр каламалли сăвă текстне çирĕп пĕлет, ăна тĕрĕс те палăртуллă, тивĕçлĕ интонаципе каласа парать.

**«4» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** ача вуланă текста ăнланать пулсан;

1- мĕш çур çулта пĕр тикĕссĕн, сăмахсене вакламасăр (йывăр сăмахсене сыпăкласа), минутра 25 сăмахран кая мар вулать;

1- мĕш çур çулта пĕр тикĕссĕн, сăмахсене вакламасăр (йывăр сăмахсене сыпăкласа) минутра 40 сăмахран кая мар вулать.

**«3» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** ача мĕн вуланине вĕрентекен пулăшнипе çеç ăнланса илет пулсан;

1- мĕш çур çулта текста такăна-такăна, сăмахсене вакласа (хăш- пĕр сăмахсене çеç туллин) минутра 25 сăмахран кая мар вулать;

2- мĕш çур çулта тикĕссĕн, сăмахсене вакласа (хăш-пĕр сăмахсе- не туллин) минутра 35 сăмахран кая мар вулать, анчах сăмахсемпе сыпăксене 3-4 çĕрте пĕр-пĕринпе пăтраштарать, сиктерсе хăварать, вырăнĕпе улăштарать, сăмахсемпе предложенисем хушшинчи чарăнусене тĕрĕс тумасть; мĕн çинчен вуланине каласа панă чухне пуплев йăнăшĕсем тăвать, вĕсене вĕрентекен пулăшнипе çеç тӳрлетет; пăхмасăр каламалли сăвă текстне çирĕпех пĕлмест.

**«2» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** ача вĕрентекен ыйтă- вĕсем пулăшнипе те текста ăнланаймасть;

1- мĕш çур çулта сас паллисемпе 20 сăмахран кая мар вулать;

2- мĕш çур çулта такăна-такăна, сăмахсене сыпăкласа, минутра 30 сăмахран кая мар, сыпăксене, сасăсене 6 çĕрте пĕр-пĕринпе пăтраштарса, сиктерсе хăварса, ылмаштарса вулать; сăмахсемпе предложенисем хушшинчи чарăнусене тума пĕлмест; текст ăш- лăхне вĕрентекен пулăшнипе те каласа параймасть; сăвă тексчĕн пысăк пайне пăхмасăр калаймасть.

**«1» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** ача уйрăм сас пал- лин каласа та вулама пĕлмест; пĕчĕк сăвва та пăхмасăр калама вĕренеймест.

**III класс**

**«5» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен мĕн вуланине туллин ăнлансан;

1 -мĕш çур çулта тулли сăмахăн (пĕрремĕш хут тĕл пулнă сăмах- сене сыпăкласа), пĕр тикĕссĕн, тивĕçлĕ интонаципе минутра 65 (ăшра 80) сăмахран кая мар вулать;

2-мĕш çур çулта тĕрĕс ăнланса, пĕр тикĕссĕн, сăмахсене вак- ламасăр, текст пĕлтерĕшĕпе шухăшне шута илсе тивĕçлĕ интонаципе (хăвăрт е хуллен, сасса хăпартса е хăпартмасăр, логика пусăмĕсемпе тăхтавсем туса) минутра 75 (ăшра 80) сăмахран кая мар вулать; вуланине туллин,

кёскен тата суйлавлăн каласа пама, пысăках мар текст пайĕсене харкам тĕллĕн уйăрса ят пама, ансăр план тăрăх каласа пама, ыйтусене хуравлама, шухăшне текстри тĕслĕхпе çирĕплетме, хайлавăн тĕп шухăшне ваттисен сăмахĕсемпе тата каларăшсемпе палăртма, текста асăмласа каласа панă чухне сăнарлă сăмахсемпе усă курма пĕлет; автор герой çине мĕнле куçпа пăхнине, сăвă, калав, юптару, пьеса ансат уйрăмлăхĕсене чухлать; пăхмасăр каласа памалли сăвă текстне çирĕп пĕлет, ăна тĕрĕс те палăртуллă каласа парать.

**«4» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен вуланă текста ăнланать пулсан;

1- мĕш çур çулта текста палăртуллăн, сăмахсене вакламасăр (йывăр сăмахсене сыпăкласа), вулав тĕрĕслĕхне асăрхаса, йăнăшсене тӳрлетсе пырса, минутра 50 сăмахран кая мар вулать;

2- мĕш çур çулта вулав хăвăртлăхĕ 65 сăмахран кая мар, вулав- ра 1-2 йăнăш, ача ăна хăех тӳрлетет; сăвва палăртуллăн, тивĕçлĕ интонаципе пăхмасăр каласа пама пĕлет, анчах та пысăках мар йăнăшсем (пĕр сăмахах темиçе хут калани, пăтраштарни т.ыт.те) тăвать.

**«3» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен ача текстăн тĕп шухăшне вĕрентӳçĕ пулăшнипе çеç ăнланать пулсан;

1- мĕш çур çулта текста тулли сăмахăн (хăш-пĕр сăмахсене вакласа), сасса улăштармасăр минутра 50 сăмахран кая мар вулать;

2- мĕш çур çулта вулав хăвăртлăхĕ минутра 60 сăмахран кая мар, ача сăмахсене, сыпăксемпе сасăсене 4-6 çĕрте пăтраштарса, сиктерсе хăварса, вĕсене вырăнĕпе ылмаштарса, сăмахсенчи пусăмсене тĕрĕс мар туса вулать; мĕн çинчен вуланине çыхăнул- лăн каласа пама пĕлмест, текст пайĕсене уйăрса ят пама вĕрентӳçĕ пулăшнипе çеç пултарать, пуплев йăнăшĕсем тăвать, вĕсене пулăшмасăр тӳрлетеймест; пăхмасăр каламалли сăвва çирĕпех пĕлмест.

**«2» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен ача 1-мĕш çур çулта сасса улăштармасăр, сăмахсене вакласа, минутра 35 сăмахран кая мар вулать;

2-мĕш çур çулта хăш-пĕр сăмахсене çеç вакламасăр минутра 45 сăмах таран вулать; 6 йăнăшран ытларах тăвать; мĕн вуланине пăтраштарса, çыхăнусăр каласа парать, вĕрентекен ыйтăвĕсемпе те текстăн пайĕсене уйăрма пĕлмест; сăввăн пысăк пайне пăхмасăр каласа пама пултараймасть;

**«1» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** ача сăмахсене сыпăк- ласа та вулаймасть; мĕн вуланине ăнланмасть, каласа параймасть; сăвва пăхмасăр каласа пама пĕлмест.

## IV класс

**«5» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен ача тулли сăмахсемпе, ăнланса, литература чĕлхин тĕп виçисене пăхăнса, вулав тĕрĕслĕхне асăрхаса пырса вулать пулсан;

1- мĕш çур çулта вулав хăвăртлăхĕ минутра 80 (ăшра 95) сăмах- ран кая мар;

2- мĕш çур çулта - минутра 95 (ăшра 110) сăмахран кая мар; ача текста палăртуллă вулама харкам тĕллĕнех хатĕрленме пĕлет; текстăн тĕп шухăшне тивĕçлĕ интонаципе палăртса вулать; мĕн вуланине туллин, кĕскен тата суйлавлăн, калавçă сăпатне улăштармасăр тата улăштарса каласа пама пултарать, вуланин тĕп шухăшне хăй сăмахĕсемпе каласа парать; текстри сăнарсене, ĕçсене, çут çанталăка сăнласа паракан сăмахсене, сăмах майлашăвĕсене тупса пама пĕлет; геройсем пурнăçлакан ĕç-хĕле кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен хак пама, калаври ĕçсен йĕркине палăртма, автор çинчен каласа пама пултарать; автор геройсем çине мĕнле куçпа пăхнине, литература терминĕсен (танлаштару, эпитет, метафора, гипербола, метоними, ирони) пĕлтерĕшĕсене чухлать; пăхмасăр каламалли сăвва çирĕп пĕлет, ăна тĕрĕс те палăртуллă, тивĕçлĕ интонаципе, логика чарăнăвĕсемпе пусăмĕ- сем туса каласа парать.

**«4» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен ача ăнланса, тулли сăмахăн, пĕлтерĕшпе шухăша тивĕçлĕ интонаципе тĕрĕс вулать пулсан;

мĕш çур çулта вулав хăвăртлăхĕ 70 сăмахран кая мар;

мĕш çур çулта - 85 сăмахран кая мар; ача вуланă чухне 1-3 йăнăш тăвать, вуланин тĕп шухăшне хăй тĕллĕнех палăртать, анчах каласа панă чухне пуплев йăнăшĕсем тăвать, вĕсене вĕрентӳçĕ пулăшнипе тӳрлетет; текста туллин, кĕскен, суйлавлăн, калавçă сăпатне улăштармасăр тата улăштарса каласа панă чухне пысăках мар йăнăшсем тăвать; литература теорийĕн ансат ăнлавĕсене (эпитет, метафора т.ыт.те) пĕтĕмĕшле ăнкарать; сăвва пăхмасăр каласа пама пĕлет, анчах 1-2 йăнăш тăвать, вĕсене хăех тӳрлетет.

**«3» паллӑ ҫакӑн пек чухне лартмалла:** вӗренекен ача мӗн вуланине хӑй тӗллӗнех ӑнланаймасть пулсан;

1- мӗш ҫур ҫулта сасса улӑштармасӑр, тулли сӑмахӑн (хӑш-пӗр сӑмахсене вакласа) минутра 65 сӑмахран кая мар вулать;

2- мӗш ҫур ҫулта сӑмахсене вакламасӑр минутра 80 сӑмахран кая мар, 4-6 йӑнӑш туса вулать; вулани ҫинчен вӗрентӳҫӗ пулӑш- нипе ҫеҫ кӗскен каласа парайрать; сӑвва пӑхмасӑр каласа пама пӗлет, анчах йӑнӑшсем тӑвать, вӗсене вӗрентӳҫӗ пулӑшнипе ҫеҫ тӳрлетет.

«2» паллӑ ҫакӑн пек чухне лартмалла: **вӗренекен ача**

1- мӗш ҫур ҫулта сӑмахсене вакласа (хӑш-пӗрисене тулли сӑмахӑн), такӑна-такӑна, йӑнӑшсем туса, минутра 60 сӑмах таран вулать;

2-мӗш ҫур ҫулта та тулли сӑмахӑн вулаймасть, 6 йӑнӑшран ытларах тӑвать, минутра 70 сӑмах таран вулать; ача текста пӑтраш- тарса, ҫыхӑнусӑр каласа парать, пуплев йӑнӑшӗсем чылай тӑвать, пулӑшмасӑр план тума, вуланин тӗп шухӑшне уҫса каласа пама пӗлеймест; сӑввӑн пысӑк пайне пӑхмасӑр каласа параймасть.

**«1» паллӑ ҫакӑн пек чухне лартмалла:** вӗренекен ача сӑмах- сене сыпӑкласа вулать, мӗн вуланине ӑнланаймасть, сӑвва пӑхмасӑр калама пачах пӗлмест пулсан.

Литература вулавне пахаланӑ чухне сасӑпа, ӑшра вуланине, ыйтусене еплерех хуравланине шута илмелле. Хакламалли вулав тексчӗн калӑпӑшӗ: 2-мӗш класра - вӗренӳ кӗнекинчи страницӑн 1/4 пайӗ, 3-мӗш класра - 1/3 пайӗ, 4-мӗш класра - 1/2 пайӗ. Вӑл е ку паллӑна мӗншӗн лартнине ӑнлантармалла, ачасене тӗрӗс те ӑнкарса вулама, текста тулашӗпе ӑшлӑхӗ тӗлӗшӗнчен тарӑнрах сӳтсе явса пахалама хавхалантармалла.

Литература вулавне вӗрентӳ ҫулӗнче икӗ хутчен пӗтӗмӗшле тӗ- рӗслесе хаклаҫҫӗ, 1-мӗш ҫур ҫул вӗҫӗнче тата 2-мӗш ҫур ҫул (вӗренӳ ҫулӗ) вӗҫленес умӗн.

Класс тулашӗнчи вулав ӑслайӗсемпе хӑнӑхӑвӗсене тӗрӗслесе хакласси

Вӗренекенсен класс тулашӗнчи вулав пахалӑхне тӗрӗслесе хакланӑ чухне тӗп вырӑнта вулавҫӑн ӑслав ӑслайӗсемпе хӑнӑхӑвӗсе- не шута илмелле. Ҫав шутра, ача-пӑча кӗнекисене пӗлни, вӗсене хӑй тӗллӗнех суйласа илме пултарни, кӗнекене вӗҫне ҫитиччен вуласа тухни, ӑнланса вулани, вулани ҫинчен ҫыхӑнуллӑн каласа пани, кӗнекери ӳкерчӗксем текст ӑшлӑхӗн хӑш самантне сӑнлланине ӑнкарни.

**Паллӑна ача эрнере мен чухле вуланине шута илсе лартаҫҫе.**

Вулав норми ҫакӑн пек: II класра - 1-мӗш ҫур ҫулта 1,5-3 страница,

2- мӗш ҫур ҫулта 5-10 страница; III класра - 1-мӗш ҫур ҫулта 10-12 страница, 2-мӗш ҫур ҫулта 20-25 страница; IV класра - 1-мӗш ҫур ҫулта 20-25 страница, 2-мӗш ҫур ҫулта 30-35 страница.

Класс тулашӗнчи вулавшӑн вӗренӳ чӗрӗкӗсенчи тата пӗтӗмӗш- ле паллӑна уйрӑммӑн лартмаҫҫӗ, ӑна литература вулавне хакланӑ чухне шута илмелле.

**1 класс**

Ачасен класс тулашӗнчи вулавне паллӑсемпе мар, сӑмахпа каласа хаклаҫҫӗ. Япӑх каласа хурламалла мар, ачана харкам тӗллӗн кӗнеке вулама хавхалантармалла.

**2 класс**

**«5» паллӑ ҫакӑн пек чухне лартмалла:** вӗренекен программӑ- ра кӑтартнӑ (кӑтартманнисене те) пӗрмаях вулать, пӗр-пӗр кӗнекене ыттисенчен унӑн тулаш паллисем (ячӗпе автор хушамачӗ) тӑрӑх уйӑрса илет, кӗнеке авторӗн ячӗ тата унти ӳкерчӗксем тӑрӑх мӗн е кам ҫинчен ҫырнине ӑнкарать, урокра хайлава хӑй тӗллӗн ӑшра вуласа тухма пултарать, вӗрентӳҫӗ ыйтӑвӗсем тӑрӑх кӗнекери сӑнарсене асӑнса тухма тата вӗсене сӑнлама пӗлет, класра халь ҫеҫ е маларах вуланӑ кӗнекесенчи хайлава аса илсе каласа параять; класра вуласа тишкернӗ 1-2 кӗнеке (хайлав) ятне аса илсе калать пулсан.

**«4» паллӑ ҫакӑн пек чухне лартмалла:** вӗренекен програм- мӑра кӑтартнӑ кӗнекесене вулать, пӗр-пӗр кӗнекене ыттисем хуш- шинчен ун ячӗпе автор хушаматне пӑхса суйласа илеет, кӗнеке авторӗпе ячӗ, ӳкерчӗксем е кӗнеке ячӗпе унти ӳкерчӗксем тӑрӑх мӗн е кам ҫинчен ҫырнине ӑнкарайрать, урокра палӑртнӑ вӑхӑтра хайлава хӑй тӗллӗнех ӑшра вуласа тухаять, вӗрентӳҫӗ ыйтӑвӗсем тӑрӑх кӗнекери сӑнарсене асӑнса тухма тата вӗсене сӑнлама пӗлет, халь ҫеҫ е маларах класра вуланӑ кӗнеке е хайлав ҫинчен каласа параять; уйрӑм темӑпа класра вуласа ушкӑнпа тишкернӗ пӗр-пӗр кӗнекен (хайлавӑн) ятне аса илеет пулсан.

**«3» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** ача кĕнекене вĕ- рентекен аса илтернипе çеç вулать, пĕр-пĕр кĕнекене ыттисенчен унăн паллисем тăрăх вĕрентӳçĕ пулăшнипе çеç уйăрайрать, унăн темине (кам е мĕн çинчен çырнине) кĕнеке хуплашкинчи е текстри ӳкерчĕксем тăрăх çеç ăнкарайрать; урокра палăртнă вăхăтра çĕнĕ кĕнекене пăхса тухать, анчах та вĕрентӳçĕ тупма каланă хайлава хăй тĕллĕн тупаймасть, класра халь çеç е маларах вуласа тухнă кĕнеке çинчен чуххăмăн çеç каласа пама тата сăнарсене асăнса тухма пĕлет, класра вуласа тишкернĕ кĕнекесен ячĕсене хăш-пĕр темăпа çыхăнтарсан çеç аса илме пултараять пулсан.

II класра класс тулашĕнчи вулавшăн асăннă паллăсенчен япăхраххисене лартма юрамасть.

**4 класс**

**«5» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** ача урок тĕлне кĕне- кене вĕрентӳçĕ асăрхаттармасăрах е пулăшмасăрах вуласа килет, пĕр-пĕр кĕнекене унăн паллисем, вĕрентӳçĕ сĕннĕ тема тата хăйне килĕшни тăрăх ытти кĕнекесенчен çăмăллăнах уйăрса илме пĕлет, вулани çинчен каласа панă чухне хăйĕн мĕн пур вулав ăслайĕсемпе тата хăнăхăвĕсемпе усă курать, калаçăва тимлĕн хутшăнать, текстра пĕр-пĕр вĕçленнĕ шухăша кăтартакан вырăна (эпизода) уйăрса илме, ун çинчен тĕрлĕ мелпе (туллин, кĕскен, сăмахлă ӳкерчĕк туса т.ыт.те) каласа пама пултарать; класс тулашĕнчи вулав урокĕсенче тишкернĕ 1-2 çыравçăн кĕнекисене çăмăллăнах аса илеет пулсан.

**«4» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** ача кĕнекесен ушкă- нĕсенчен вĕрентӳçĕ сĕннĕ темăпа е сĕннĕ списокран хăйне килĕшнĕ кĕнекене çăмăллăнах суйласа илет пулсан; вулани çинчен каласа панă чухне вĕрентӳçĕ асăрхаттарнипе хăйĕн вулав ăслайĕсемпе тата хăнăхăвĕсемпе усă курать, класс тулашĕнчи вулав урокĕсен ушкăнла ĕçне хастар хутшăнать, вулани çинчен вĕрентӳçĕ ыйтăвĕсем е хатĕр план тăрăх каласа панă чухне йăнăшсем тума пултарать, анчах хăйне мĕн килĕшни е килĕшменни çинчен каласа параять; класс тулашĕнчи вулав урокĕсенче тишкернĕ 1-2 çыравçăн кĕнекисене аса илеет, анчах вĕсен ячĕсене асăнса тухнă чухне кăштах йăнăшать пулсан.

**«3» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** ача пĕр-пĕр кĕнекене вĕрентӳçĕ сĕннĕ темăпа суйласа илме пĕлет, анчах класс тулашĕнче вуламалли виçерен сахалтарах вулать, кĕнекене ушкăнпа сӳтсе явас ĕçе хастар хутшăнмасть, класс тулашĕнчи вулав урокĕсенче сӳтсе явнă кĕнекесен авторĕсене аса илме пултарать, хайлавсен ячĕсене асăннă чухне йăнăшсем тăвать.

Класс тулашĕнчи вулавшăн ку класра та япăхрах паллăсем лартмалла мар.

**4 класс**

**«5» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** ача класс тулашĕн- чи вулав урокне хатĕрленнĕ май илемлĕ литература хайлавĕсене асăрхаттармасăрах вулать, тĕрлĕ пулăшу кĕнекисемпе (справочник, словарь т.ыт.те) усă курать, мĕн вулани тата унăн авторĕ çинчен уçăмлăн каласа парать, ача-пăча хаçат-журналне вуласах тăрать, пĕрремĕш хут тĕл пулнă кĕнекере мĕн çинчен çырнине кӳртĕм, аннота- ци тата вĕçĕнче калани тăрăх чухлама пултарать, кирек мĕнле темăпа та темиçе аворăн, вĕсен кĕнекисен ячĕсене аса илейрет пулсан.

**«4» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** сĕннĕ списокран ача хăйне килĕшекен кĕнекене суйласа илме пĕлет, анчах ку ăслайпа яланах усă курмасть, пулăшу кĕнекисемпе ăнăçсăртарах усă курать, яланах хăй тĕллĕн те мар; ача-пăча хаçат-журналне сайра хутра çеç вулать, кĕнекери кӳртĕмпе, аннотаципе, вĕçĕнче каланипе усă курать, анчах яланах мар; класс тулашĕнчи урок валли хушнă темăпа кĕнеке вуласа килет, урокра литература хайлавĕ çинчен каласа парайрать; класс тулашĕнчи вулавăн кирек хăш темипе те темиçе кĕнекен, вĕсен авторĕсен ячĕсене аса илейрет, анчах тĕп- тĕрĕсех калаймасть.

**«3» паллă çакăн пек чухне лартмалла:** вĕренекен кĕнеке- не сĕннĕ списокран суйласа илме пĕлет, пулăшу кĕнекипе туп- са панипе çеç усă курма пултарать, ача-пăча хаçат-журналне вуламасть; кĕнекери кӳртĕмпе, аннотаципе, вĕçĕнче каланипе вĕрентекен пулăшнипе çеç усă кураять; çитес урокăн темипе виçере кăтартнинчен сахалтарах вулать, литература хайлавĕ çинчен вĕрентекен пулăшнипе çеç калаять, йăнăшсем тăвать.

Класс тулашĕнчи вулавшăн ку класра та япăхрах паллăсем лартмалла мар.

**Çак йăнăшсемпе çитменлĕхĕсем пулсан оценкăна чакарма тивет.**

**Йăнăшсем:**

- вулакан сăмахсене пăсни (сас паллисемпе сыпăксене тата сăмахсене улăштарни, ылмаштарса лартни, сиктерсе хăварни,кĕртсе лартни);

- пусăмсене тĕрĕс лартманни (2-рен ытларах пулсан);
- пĕтĕм текста шухăша кура чарăнусем тумасăр вулани, сасăпа вуланă чухне вулав хăвăртлăхне пăсни, сăмахсене уçăмлă каламанни;
- палăртнă вăхăтра вуласа тухнă текстăн пĕтĕмĕшле шухăшне ăнланманни;
- текст ăшлăхĕ тăрăх лартакан ыйтусене тĕрĕс мар хуравлани;
- текстăн тĕп шухăшне палăртма пĕлменни; вуласа тухнă текстăн тĕп содержанине ăнланнине çирĕплетекен сăмахсемпе çаврăнăшсене тупма пултарайманни;
- каласа панă чухне хайлаври событисен йĕркине пăсни;
- пăхмасăр каласа памалли текста çирĕп пĕлменни;
- сасса улăштармасăр, палăртулăх мелĕсене шута илмесĕр вулани.

**Çитменлĕхсем:**

- хайлавăн тĕп шухăшне палăртнă чухне кăшт йăнăшни;
- палăртулăх хатĕрĕсемпе вырăнсăртарах усă курни;
- персонаж характерне уçнă чухне палăртулăх хатĕрĕсемпе çителĕксĕртерех усă курни.

**Вулав хаклавне йĕркелесси.**

***Кулленхи хаклав*** кашни урокрах уйрăм ача е пĕтĕм класс хуравитĕр пулса пырать: текста вулани, хайлав содержанине каласа пани ( туллин, кĕскен, суйлавлăн), пăхмасăр е хут тăрăх палăртуллă вулани. Ку, тĕпрен илсен, тишкерекен хайлавсен материалĕ çинче сăмах вĕççĕн пулса иртет. Çыру ĕçĕсем те пулма пултараççĕ – калăпăшĕ тĕлĕшĕнчен пысăках мар ĕçсем (ыйтусене хуравлани, героя е пулăма сăнани), кĕнекепе, ӳкерчĕксемпе тата «Тупмалли» харкам тĕллĕн ĕçлени. Кунта «предложенисене вĕçле», «тĕрĕс хурав туп», «йăнăша туп» евĕрлĕ тата ытти тест заданийĕскм те вырăнлă.

***Тематика хайлавне*** вĕренсе пĕтернĕ тема хыççăн сăмах вĕççĕ тата çыру ĕçĕ урлă ирттереççĕ. Çыру ĕçне тест заданийĕсене пурнăçлаттараса та ирттерме юрать. Анчах та кунта литература вулавĕн уйрăмлăхĕсене тĕплĕн шута илмелле. Иккĕлле хуравлама май пур ыйтусенчен хытă сыхланмалла.

Сасăпа вуланин ***пĕтĕмĕшле (итог) хаклавне*** кашни ачапа уйрăммăн (индивидуально) ирттереççĕ. Тĕрĕслев валли лексикăпа содержани тĕлĕшĕнчен шăл çемми, анчах палламан текст суйласа илеççĕ. Текста суйланă чухне сăмахсене шутне палăртаççĕ (вăтам вăрăмăш сăмахра 6 паллă пулмалла, паллă шутне сас палли те, сăмахсен хушшинчи пушă вырăн та кĕрет). Текста ăнланнине тĕрĕслеме учитель кашни ача валли уйрăм карточка хатĕрлет. Карточкăсенчен ĕçсем пĕтĕмĕшлисем тата дифференциленисем пулма пултараççĕ. Вулав пахалăхне тĕрĕслесе хакланин результачĕсене шута илме учитель çакнашкал схемăпа усă курать.

**Вулав пахалăхне хакласа шута илмелли схема**

| Вĕренекен хушамачĕ | Вулавçăн текстăн тĕп шухăшне ăнланма май пур хăвăртлăхĕ | Йăнăшсемсĕр вулани | Текст содержанинийĕ тăрăх хуравлани | Палăртуллă вулав ( малтанах хатĕрленнĕ хыççăн) | Пĕтĕмĕшле оценка |
|---|---|---|---|---|---|
| | | | | | |

Кашни ачан вулав пахалăхне кашни уйăхрах тĕрĕслесе класс журналĕнче çак виçесем тăрăх хакласа паллă лартаççĕ: (1) тивĕçлĕ хăвăртлăпа, (2) тĕрĕс, (3) ăнланса, (4) палăртса вулани.

**«5»** паллă – 4 требованине те пурнăçланă пулсан.

«4» паллă – вулав хăвăртлăхĕн виçине пурнăçланă ( кашни чĕрĕкрех вăл урăх), анчах ытти виçесенченпĕрипурнăçланман пулсан.

«3» паллă – хăвăртлăх виçи пурнăçланнă, анчах ытти виçесенчен иккĕшĕ пурнăçланман пулсан.

«2» паллă – хăвăртлах виçи пурнăçланнă, анчах ытти 3 виçи те пурнăçланман е хăвăртлăх виçи пурнăçланман, анчах ытти виçесем пурнăçланнă пулсан. Ача харкамлăхне кура, енчен те вăл тĕрĕс те палăртуллă вулать, вуланине ăнланать, анчах та хăвăртлăх виçине кăшт çеç вырнаçаймасть пулсан «2» лартмасан та юрать.

**Пăхмасăр калани:**

«5» - çирĕп, пулăшмасăрах пăхмасăр калама пĕлет, палăртуллă вулать.

«4» - сăвва пăхмасăр калама пĕлет, анчах хăш-пĕр сăмахсене вырăнĕпе ылмаштарать, йăнăшсене хăех тӳрлетет.
«3» - пăхмасăрах калать, анчах та текста çирĕпех астумасть.
«2» - пăхмасăр каланă чухне йĕркесене пăтраштарать, текста пĕтĕмпех пĕлмест.

**Сăвва палăртуллă вулани.**

Палăртуллă вулассин виçисем:

1) логика пусĕмĕсене тĕрĕс лартни;
2) чарăнусем туни;
3) тивĕçлĕ интонаципе вулани;
4) тĕрĕс хăвăртлăхпа вулани;
5) йăнăшсăр вулани;

«5» - пур виçесене те тивĕçлипе пурнăçланă пулсан.
«4» - пĕр-икĕ виçине пурнăçлайман пулсан.
«3» - виçесенчен виççĕшĕнчен йăнăшсем тунă пулсан.
«2» - 3 виçерен ытларахăшĕнче йăнăшсем пулсан.

**Рольсем тăрăх вулани.**

*Виçесем:*
*1)*харкам сăмахсене вăхăтра вулама пуçласси;
2) тĕрĕс интонаци тăвасси;
3)йăнăшсăр вуласси;
4) палăртса вуласси.
«5» - пур виçесене те пурнăçланă.
«4» - виçесенчен пĕринче йăнăшсем туна.
«3» - виçесечен  иккĕшĕнче йăнăшсем тунă.
«2» - виçесенче виççĕшĕнче йăнăшсем тунă.

**Вуласа тухнине каласа пани**.

«5» - вуланин содержанине харкам тĕллĕнех , йĕркипе, чи кирлине сиктерсе хăвармасăр ( туллин е кĕскен, е план тăрăх ) каласа парать, ыйтăва тĕрĕс хуравлать, хурава тивĕçлĕ сыпăксене вуласа панипе çирĕплетме пултарать.
«4» - пĕр-икĕ йăнăш тăвать, вĕсене хăех тӳрлетет.
«3» - учитель пулăшнипе каласа парать, вуласа тухнин содержанине йĕркипе каласа пама пултараймасть, пуплев йăнăшесене тăвать.
«2» - вуласа тухнин содержанине каласа параймасть.